Спорт

# 7-мĕш ăмăрту Муркаш тăрăхĕнче иртрĕ

Пирĕн района республикăри ытти районсемпе çĕршывăн тĕрлĕ регионĕсенчен делегацисем тăтăш килни Муркашсем сумлă иккенни çинчен калать. Республика кунне иртterсе ятăмăр кăна, иртнĕ шăмат кун каллех районта пысăк мероприяти иртрĕ. Шетмĕпуçĕнчи вăрман уçланкинче патшалăх влаçĕн тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсенче ĕçлекенсен Спартакиадин çуллахи тапхăрĕ иртрĕ. Чăваш Республикин физкультурăпа спорт тата туризм министрĕ А.А.Николаев черетлĕ спорт уявне уçнă май асăннă мероприяти хальхипе 7-мĕш хут иртнине палăртрĕ. Пурне те ăнăçусем сунчĕ.



Ăмăртăва хутшăнакансене çавăн пекех Чăваш Республикин Президент администрацийĕн ертӳçин çумĕ М.М. Архипов саламларĕ:

–Ăнăçлă стартпа питĕ лайăх результатсем тумалла пултăр, - терĕ вăл.

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн аппаратĕн ертӳçи А. С. Иванов палăртнă пек, çак Спартакиадăна кăçалхипе 7-мĕш çул иртterни эпир хамăр çĕршыври пултарулла спортсменсене ырă суннине кăтартса парать. Çавăнпа та «паянхи ăмăрту Европа чемпионачĕ пек ирттĕр» тенинче шӳт çеç мар, ăнăçу хамăртанах килни çинчен калани те.

Ăмăрту Питрав кунĕнче иртнĕ май район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов хăнасене Петрпа Павел çветтуйĕсен пулăшăвне сĕнни те ахалех пулмарĕ. Ăмăртусемсĕр пуçне тата тĕрлĕ номинаципе çĕнтерӳçĕсем йышлăн пулчĕç. Муркашра чашлаттарса тăракан çумăр та уçланкăран пăрăнса иртрĕ, спорта юратакансене хăй пурпĕрех чăрмав пулмассине пĕлсе-ши (ара, малтан пĕрĕхекен çумăр витĕрех шывра ишме пуçларĕç те-ха хутăш эстафетăна хутшăнакансем), ăмăрту хĕрсе пынăçемĕн хĕвел те хĕртсех пăхма пуçларĕ.

Хутăш эстафетăна чи малтан министерствăсен командисем пуçларĕç. Шыва чи малтан чăмрĕç, ишсе тухакана кăмандăри тепĕр çын кĕтсе илсе малалла чупрĕ. Эстафетăна командăри велосипедист вĕçлерĕ. Чи правуррисем ку ăмăртура Юстици министерствин ĕçченĕсем пулчĕç. Физкультурăпа спорт, туризм министерствипе Чăваш Енри Гостехнадзор службин ĕçченĕсем те дипломсăр юлмарĕç, 2 тата 3-мĕш вырăн хуçисем пулса тăчĕç.

Асăннă спорт тĕсĕпе вырăнти хăй тытăмлăх органĕсенче ĕçлекенсен хăйсен çĕнтерӳçисем пулчĕç. Малти виçĕ вырăна çапла пайларĕç: Шупашкар хулин администрацийĕ, Канаш тата Вăрнар районĕсен командисем.

Федераллă ведомствăсен территори органĕсенче ĕçлекенсен пултарулăхне те судьясем уйрăммăн пĕтĕмлетрĕç. Хутăш эстафетăра Суд приставĕсен федераллă службин Чăваш Республикинчи управленийĕн команди çĕнтерчĕ. Чăваш Енри Федераллă казначейство управденийĕпе РФ ГУ МЧС команди хыççăнхи чыслă вырăнсен хуçисем пулса тăчĕç.

Мини-футболла харăсах виçĕ вырăнта выларĕç. Çурма финала тухнă командăсем мĕн вĕçне çитичченех çĕнтерӳшĕн кĕрешрĕç. Министерствăсен командисенчен ку ăмăртура Физкультурăпа спорт, туризм министерстви никама та хăйĕнчен иртterмерĕ. Экономика аталанăвĕн министерстви 2-мĕш, Юстици министерстви 3-мĕш вырăна тухрĕç.

Хуласемпе районсен вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен командисенчен кам мини-футболла ăстарах вылять тетĕр-и? Хуравĕ вара çапла: Ăмăртăвăн ку тĕсĕпе те Шупашкар хула администрацийĕ малти, Канашсем 2 вырăна алăран ямарĕç. Комсомольски районĕнче те мини-футболла япăх мар выляççĕ иккен: 3 вырăна тухрĕç.



Федераллă ведомствăсен территори органĕсенчен футболла выляссипе айăплава пурнăçлакан федераллă службăн Чăваш Енри управленийĕ ытти çĕрти ĕçтешĕсенчен чи ăсти пулчĕ. Наркотиксене сутассине контроллекен управленипе таможня службин Чăваш Енри таможня управленийĕн командисем хыççăнхи 2 тата 3 вырăнсене пайларĕç.

Канат туртнă çĕрте те хĕрӳ иртрĕ ăмăрту. Министерствăсемпе ведомствăсем хушшинче чи вăйли Çут çанталăка сыхлакан министерство команди пулчĕ. Ял хуçалăх министерствипе Гостехнадзор командисем – 2 тата 3 вырăнсенче.

Хуласемпе районсен хăй тытăмлăх органĕсенче ĕçлекенсенчен вара Вăрнарсене никам та çĕнтереймерĕ. Канашсемпе Улатăрсем 2 тата 3 вырăнсене тухнине çирĕплетекен дипломсене тивĕçрĕç.

Федераллă ведомствăсен управленийĕсем хушшинче канат туртассипе те айăплава пурнăçлакан управлени команди çĕнтерчĕ. Федераллă казначейство управленийĕпе Россельхознадзор командисем 2 тата 3 вырăнсене тухрĕç.

Çак виçĕ шайри командăсемсĕр пуçне çемье командисем хутăш эстафетăра хăйсен пултарулăхне кăтартрĕç. Кăçалхи ăмăртура вĕсем йышлăнах пулмарĕç. Пирĕн районти Муркаш-Шаптакри Павловсен çемйи мала тухрĕ.

Никамăн та кăмăл пăсăлмарĕ çак кун. Çĕнтерӳçĕсене те, ăмăртăва хутшăннă ытти командăсене те спорта юратни пĕрлештерсе тăчĕ. Тата Муркашсен тараватлăхĕпе илемлĕ çут çанталăкĕ.

- Муркашсем хăнасене кĕтсе илме пĕлеççĕ яланах. Тавах сире çакăншăн, - терĕç ăмăртăва килнисем, район администраци пуçлăхне Ю.А. Иванова тав турĕç.

**Л.ПАВЛОВА.**

Комисси ларăвĕнчен

# Наркотиксен çулне пӳлер

Июлĕн 9-мĕшĕнче район администрацийĕнче наркотик хатĕрĕсемпе усă курассине тата вĕсене саккуна пăсса сарассине чарас енĕпе ĕçлекен комиссин ларăвĕ иртрĕ. Унăн ĕçне комисси председателĕ, район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, культура, физкультурăпа спорт тата архив ĕçĕсен пайĕн пуçлăхĕ А.Е. Андреева ертсе пычĕ.

Пĕрремĕш ыйтупа – «Çул çитмен çамрăксен «Доверие» клубĕн ĕçĕ-хĕлĕ пирки» çак клубăн ертӳçи Л.А. Верховцева каласа пачĕ. Кунта 12–15 çулхи çамрăксене явăçтараççĕ. Çамрăксене япăх пулăмсенчен асăрхаттарассипе клуб пысăк ĕç туса иртterет. Ку тĕлĕшпе туса иртterмелли ĕçсен ятарлă планне те туса хатĕрленĕ. Ларура августăн 1-мĕшĕнчен тытăнса çак клубăн канашне йĕркелеме йышăнчĕç.

Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Г.П. Мазиков наркотиксем енне сулăнакансене çак сиенлĕ пулăмран сыхласа хăварас енĕпе туса иртterекен ĕçсемпе паллаштарчĕ. Хальхи вăхăтра ку ял тăрăхĕнче наркотиксемпе усă куракансене 4 çынна учета илнĕ. Ку вăл учета илнисем кăна. Тĕп задача вара вĕсем ытти çынсене çак серепене ан явăçтарччăр тени пулса тăрать. Çавна май профилактика, тĕрĕслев ĕçĕсем пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртрĕ вăл. Комисси наркотиксемпе усă куракансене май пур таран ыттисенчен уйăрма, çамрăксем валли кану центрĕ уçма йышăну турĕ.

Наркоманипе кĕрешмелли пĕтĕм тĕнчери куна халалласа туса иртterнĕ ĕçсем пирки районти тĕп больницăн психиатрĕ тата наркологĕ, комисси секретарĕ Л.М. Иванова пĕлтерчĕ. Вăл палăртнă тăрăх, сывă пурнăç йĕркине пропагандăлассси пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать. Ку енĕпе вара тĕрлĕрен спорт мероприятийĕсене, художество пултарулăх коллективĕсен смотрĕсене тата ытти мероприятисене сахал мар туса иртterнĕ. Апла пулин те туса иртterмелли ĕçсем те çук мар.

Район администрацийĕн экономика пайĕн пуçлăхĕ Э.И. Симакова Муркаш тата Мăн Сĕнтĕр райповĕсен обществăлла апатлану предприятийĕсен ĕçĕ-хĕлĕ çинче чарăнса тăчĕ. Хальхи вăхăтра обществăлла апатлану предприятийĕсенче кăна мар, магазинсенче те эрех-сăра ĕçнĕ тĕслĕхсем пур. Кунпа пĕрлех комисси членĕсем Мăн Сĕнтĕрте пончиксемпе чей сутакан кафе уçма кирлине палăртрĕç.

**Хамăр инф.**

Криминал

# Наркомансене тытса чартăмăр

Наркотикпа усă курни хăрушă пулăм пулни пирки паян хаçат вулакансене тепĕр хут аса илтеретпĕр. Макпа тата кантăрпа усă курни хăçан саккуна пăсма пуçлать? Ку культурăсене пахчара лартса ӳстерни, культурăлани, пĕр çĕре пухса суту-илĕве явăçтарни вырăнлă-и? Çак «хавхалантарусене» ура хурасси пирĕн уйрăмăн тĕп тĕллевĕ.

Утă уйăхĕн 7-мĕшĕнче 3 сехет тĕлĕнче Мускав – Етĕрне [sic: Ĕпхӳ] автоçул çинче Калмăк ялĕ тĕлĕнче кювета сиксе çаврăнса ӳкнĕ ВАЗ-2107 автомашинăна пăхнă чух пирĕн оперативниксемпе çулйĕр хăрушсăрлăхĕн инспекторĕсем машина салонĕнче мак çулçисемпе тунисене вĕтетнĕ хыççăн пулакан симĕсрех япалана асăрханă. Çавăн пекех авари пулнă вырăна пăхнă чух автомашинăран инçетрех те мар мак ӳсен-тăранне вĕтетсе хатĕрленĕ икĕ полиэтилен пакета асăрханă. Аварие лекнисем ку «парнесене» хăйсен тесе çирĕппĕнех йышăнман. Анчах экспертиза тĕрĕслевĕ полиэтилен хутаç çине авари вăхăтĕнче сирпĕннĕ юн пĕрчи салонра пулнă пĕр çамрăкăннипе тӳр килнине çирĕплетсен, «хăюллă çамрăксем» тăрă шыв çине тухрĕç.

Хутаççенче типĕтнĕ опий 469,54 грамм пулнă. Салонри 3 çамрăкран 2-шĕ наркомансем, тепри – водитель. Наркомансем тĕлĕшпе РФ Уголовнăй Кодексĕн 228 статйин 1-мĕш пайĕпе уголовнăй ĕç пуçартăмăр. Халĕ ку ĕç пирки следстви пырать.

**О. ПОТРЯКОВ,**
**районти шалти ĕçсен пайĕн уголовнăй шырав уйрăмĕн пуçлăхĕ.**

Сбербанк предлагает

# Переводы «БЛИЦ»: в любой уголок России, и даже в Казахстан

Более двух лет учреждения Сбербанка России предоставляют физическим лицам услугу – срочные денежные переводы «Блиц». Пользоваться ею могут практически везде: она применяется более чем в 6 тыс. филиалах Сбербанка, а это все областные центры, города, большинство районных центров. Данная услуга очень быстро завоевала популярность среди клиентов. Только в 2007 году в учреждениях Сбербанка России на территории Чувашской Республики осуществлено более 50 тыс., а в целом по России более 2 млн. переводов.

По системе срочных денежных переводов «Блиц» деньги можно получить в любом подразделении Сбербанка России, подключенном к данной системе, в течении 1 часа, назвав контрольный номер перевода. Данная система, основанная на применении новых банковских технологий и высокоскоростных каналов связи, обеспечивает перевод денежных средств в рублях по всей России.

Для отправки перевода отправителю необходимо указать фамилию, имя и отчество получателя, серию и номер паспорта или другого документа, удостоверяющего личность получателя, а также предъявить свой паспорт или заменяющий его документ. Максимальная сумма одного перевода «Блиц» не должна превышать 500 000 рублей.

Для получения срочного денежного перевода «Блиц» необходимо: знать контрольный номер перевода и иметь паспорт или иной документ, удостоверяющий личность.

С конца 2007 года так же молниеносно могут получать и отправлять переводы из России жители Казахстана. Международные «Блиц» переводы, в отличие от срочных денежных переводов «Блиц», совершаются не только в валюте РФ, а еще и в долларах США и евро. Максимальная сумма одного международного «Блиц» перевода не должна превышать 5000 долларов США.

**Моргаушское отделение Сбербанка.**

Пĕлтерӳсем. Объявления

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка к распределению на праве аренды, для ведения прудового хозяйства, из земель сельскохозяйственного назначения, с кадастровым номером 21:17:170204:68, местоположение: участок находится примерно в 800 м по направлению на юго-запад от ориентира жилой дом, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, д. Кашмаши, ул. Садовая, дом 92, площадью 1461 кв.м.**

**Заявления от организаций и граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.**

**Финансовый отдел администрации Моргаушского района Чувашской Республики объявляет конкурс на замещение вакантной должности муниципальной службы Чувашской Республики ведущего специалиста-эксперта. Предъявляемые требования: высшее финансово-экономическое образование. Документы принимаются в течение месяца со дня опубликования объявления.**
**Обращаться по тел.: 2-12-38, 2-12-37.**

**ООО «Энергосервис», расположенный в д. Ландыши ул. Цветочная, 31, требуются на постоянную и временную работу: тракторист на ЮМЗ-6, электромонтажники 4-5 разряда на о,4 кВ и 10 кВ, рабочие в производственный цех, электрогазосварщик 3-4 разряда. Оплата своевременная, не ниже 5000 руб.**
**Реализует за наличный и безналичный расчет: ж/б кольца для колодцев и выгребных ям, ж/б столбы для оград, печи банные металлические с котлами, коробки оконные, дверные в комплекте.**
**Тел.: 8-905-342-98-11, 60-2-39.**
**Обращаться в администрацию.**

**Все для стройки и отделки ТК «ТЕРМИНАЛ»**
**Широкий ассортимент: кирпич, газосиликат, керамблок; пиломатериалы, срубы; сухие смеси, гипсокартон, цемент; железобетонные изделия; отделочные материалы; спецтехника. Доставка.**
**Канашское шоссе, д. 7/1. Тел.: (8352)30-55-54; Тел./факс: (8352)30-55-10; E-mail: terminal_stroy@mail.ru. 4-4.**

**Куплю старинные монеты. Дорого.**
**Тел.: 8-910-388-01-61, 8-960-190-67-34. 2-8.**

**Продаю кирпич: силикатный, красный одинарный М-150, М-125, красный полуторный пустотный М-125, КББ, керамзит, гравмассу, красный половняк.**
**Тел.: 8-903-358-20-97, 44-20-97. 15-15.**

**Закупаю свинину. Тел.: 8-927-854-96-32. 1-4.**

**СХПК им. В.И. Чапаева требуются на работу зоотехник, агроном, экономист-бухгалтер по расчетам.**
**Продает или меняет автомобиль ВАЗ-2110 на УАЗ (санитарка). Тел.: 61-2-96, 61-2-95, 8-906-380-58-39.**

**Продаю автомобиль марки ВАЗ-2104 1998 года выпуска в хорошем состоянии. Цена договорная.**
**Тел.: 52-5-24, 8-902-359-50-19 звонить после 21 ч.**

**Пĕрре пăрулана хĕрлĕ ĕне сутатăп.**
**Тел.: 8-927-846-31-44.**

Муркашри линипе техника цехĕн коллективĕ кунта аслă электромехник пулса ĕçлекен Альбина Павловна Любимован амăшĕ тата участок пуçлăхĕн Ольга Сергеевна Семенован хуньамăшĕ

**Нина Капитоновна**
**СЕМЕНОВА**

вилсе кайнă пирки вĕсен çемйисемпе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланса пĕлтерет.

Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики “Моргаушский издательский дом”.

Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни - 2-12-82, экономики - 2-11-38. Факс: 2-11-36; E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Объем 1 усл. печатный лист.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Шапошников В.Л.
Номер подписан 15.07.2008 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3540.

Номер набран и сверстан в ГУП “Моргаушский издательский дом”, отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.